ХЫПАР

1999 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

42 (839) №, 2015, октябрь/юпа, 22 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/октябрĕн 21-мĕшĕ тĕлне/

| | |
|---|---|
| **ПАХЧАÇИМĔÇ** | |
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕрулми | 14 |
| Купăста | 15 |
| Чечеклĕ купăста | 40 |
| Сухан | 25 |
| Кишĕр | 25 |
| Ыхра | 200-220 |
| Хăяр | 40-50 |
| Кабачок | 30 |
| Хĕрлĕ кăшман | 20 |
| Помидор | 50-80 |
| Пылак пăрăç | 35-70 |
| Тăварланă хăяр | 130 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 120 |
| Баклажан | 35-45 |
| **УЛМА-ÇЫРЛА** | |
| Панулми | 35-70 |
| Иçĕм çырли | 70-120 |
| Апельсин | 100 |
| Лимон | 110-140 |
| Банан | 65 |
| Мандарин | 80-100 |
| Слива | 70-80 |
| Дыня | 35 |
| Арпус | 16 |
| Сырлан /облепиха/ | 250 |
| Кĕтмĕл çырли | 180 |
| Шур çырли | 180 |
| **ÇĂНĂХ-КĔРПЕ** | |
| Тулă çăнăхĕ | 25 |
| Вир кĕрпи | 35 |
| Хуратул -»- | 60-62 |
| Тулă -»- | 30 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 59 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 50 |
| Пыл | 400-450 |
| **АШ-КАКАЙ** | |
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 200-350 |
| Сурăх ашĕ | 200-280 |
| Пĕвер | 150-200 |
| Пӳре | 65-80 |
| Чăх | 200-250 |
| Салă | 120-180 |
| Кăвакал | 300 |
| Кăркка | 350 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 45-58 |
| **ПУЛĂ** | |
| Шăнтнă скумбри | 200 |
| -»- сельдь | 150-170 |
| Мойва | 160 |
| Треска | 250 |
| Горбуша | 300 |
| Шăла пулă /судак/ | 200-260 |
| Çупах /лещ/ | 100 |
| Карп | 200-230 |
| Çуйăн /сом/ | 220-300 |
| Çăрттан | 200 |
| Налим | 250 |
| **СĔТ-ТУРĂХ** | |
| Сĕт /литр/ | 35-40 |
| Хăйма | 200 |
| Тăпăрч | 200-220 |
| Сыр | 300 |
| Услам çу | 220 |






## Çурт стенине хулăнлатма

**Çуллахи вăхăтра çурта хĕллехи сивĕрен хӳтĕлесси пирки питех шухăшласах каймастпăр. Хĕл çитсен çурта питĕлемеллине ăнкаратпăр. Мĕншĕн тесен çӳхе, япăх стенасем витĕр ăшă нумай каять.**

Çурта ăшă тытакан материалпа сăрнин виçĕ паха енне палăртмалла. Хутса ăшăтнă чухне топливо перекетленет /эппин, укçа та/. Йывăç çуртăн ĕмĕрне вăрăмлатать тата хăтлăх кӳрет. Пĕлсе йĕркеленĕ ĕç çурта илемлĕрех тăвать.

Ăшă тытмашкăн стенана хулăнлатмалли ĕçе кил хуçи хаçатра çырса кăтартнă меслетсемпе усă курса хăй тĕллĕнех йĕркелеме пултарать. Ку меслетсем ытлашши тăкаклă мар, ансат.

Йывăç çурт стенине шал енчен е тулаш енчен хушма сийпе хулăнлатма пулать. Шалтан хулăнлатни аванах мар темелле. Ку меслетпе усă куракансем сайрарах. Пӳртĕн йывăç стени ирĕкре çутçанталăк улшăнăвĕсем валли хӳтлĕхсĕр юлать. Пӳртĕн тулаш стени хуçан хăйнеевĕрлĕхне палăртаканскер пулсан стенасене шалтан та питĕлеме пулать.

**Стенана тулаш енчен питĕлени пӳртри ăшша упрама, пĕренесем çĕресрен хӳтĕлеме май парать.** Темиçе çул каяллах хăпартнă çурта ăшă тытакан материала стена çумне çыпăçтарса, ăна дюбельсемпе çирĕплетсе сăрма пулать. Ăшă тытакан материала çыпăçтарса пĕтерсен çиелтен армировка сеткипе тытăнтармалла. Çиелти сие тĕрлĕрен тума юрать. Виçĕ тĕслĕх илсе кăтартăпăр: пĕрене + ăшăтакан материал + грунтовка + штукатурка. Тепĕр мел: пĕрене + ăшăтакан материал + çурт çумне каркасласа тыттарни, пичĕ /фасад/. Е тата пĕрене Ç ăшăтакан материал Çоблицовка. Облицовкăна кирпĕчрен, сайдингран е цоколь сайдингĕнчен тума юрать.

Ĕçе стена пахалăхне шута илсе йĕркелемелле. Йывăç стенана минерал мăк плитисемпе хуплани вырăнлă. Вăл экологи тĕлĕшĕнчен те таса продукци шутланать. Йывăç çуртăн стенипе маччине, урайне пенополистиролпа хуплама юрамасть. Вăл сывлăша сиенлĕ веществосем кăларать, хăвăрт тивсе каять.

Хӳтлĕх материал «сывлаканскер», хăвăрт хыпса илменскер, сывлăша сиенлĕ хутăшсем кăларманскер пулмалла. Минераллă мăк /минвата/ е чуллă вата /каменная вата/ хăрушсăрлăха тивĕçтереççĕ. Вĕсен пахалăхĕ пысăк, çав вăхăтрах хаклах мар.

**Никĕс япăх пулсан ăшăн 20% урама «ăшăтма» каять.** Никĕсе питĕлени тĕп сакайне упрама хунă пахчаçимĕçе шăнасран хӳтĕлет, пӳртри ăшша упрать.

Никĕсе çак йĕркепе «ăшăтмалла»: никĕс çумĕпе 5 см пĕр кĕреçе анлăш шăтăк чавса тухмалла. Никĕс стенине тăпраран лайăх тасатмалла, типĕтмелле. Типĕ никĕсе шыв яман сийпе /гидроизоляци/ витмелле. Битум мастики çак тĕлĕшпе юрăхлă, унпа стенана сăрламалла, унтан ăшă тытакан материал çирĕплетмелле. Никĕсе пенопласт е пенополиуретан листисемпе хӳтĕлеме аван. Листасене дюбельпе çирĕплетмелле, пĕрлешнĕ тĕле монтаж кăпăкĕпе /монтажная пена/ çыхăнтармалла. Ăшă тытакан материала хурса тыттарса тухнă хыççăн шăтăка 10-15 см хулăнăш хăйăр сармалла, унтан вĕтĕ чул /гравий/ тултармалла. Гравий çине е тăпра сапса хытармалла е бетонламалла.

Пенопласт сийне сайдингпа е цоколь плиткипе хупламалла. Цоколь хаклах мар тата илемлĕ. Хăвăра килĕшекен тĕс суйлама пулать.

**Çурта йывăç пăрăс тăрăхĕсемпе хашакласа (каркас) вĕсен хушшине минвата плитисем çирĕплетме пулать.** Ăна валли кирлĕ: минвата, йывăç пăрăссем, трельчатăй дюбельсем, бутилакрил хăйăвĕ, перфоратор, скобасем. Пăрăс хулăнăшсем плита хулăнăшпе пĕр пек пулмалла. Йывăç хатĕрĕсем типĕ тата çĕресрен, йывăç шĕккинчен, ытти кăпшанкăран хӳтĕлекен шĕвекпе сĕрсе янтăланăскерсем пулмалла. Çурт стенине те малтан лайăх тасатмалла, ятарлă шĕвекпе сĕрсе хӳтĕлемелле.

Стена çине плита сарлакăшне кура /50 см/ йывăç пăрăссем çапса тухмалла. Вĕсен хушшине минерал вата плиткисене тачăн çыпăçтарса хурса пымалла. Вĕсене трельчатăй дюбельсемпе çирĕплетмелле. Унтан конструкцие «сывлакан» сийпе сăрмалла, дюбельсемпе брус тĕлĕсенче çирĕплетмелле. Плитасен «çĕввисене» бутилакрил хăюпа çыпăçтармалла.

Сăрнă пленка çине пăрăс хашаксем çинех каллех çинçерех пăрăссем çапмалла. Сайдинг валли хашак хатĕр. Килĕшнĕ материалпа çуртăн питне хăпартатпăр.

## Халăх сăнанинчен

*■ Йывăç çулçи сарăхмасăр вăрах тăрать, хăвăрт тăкăнмасть – хĕл кĕске пулать, хаяр сивĕсем питех пулмаççĕ.*

*■ Çулçă кĕске вăхăтра тăкăнса пĕтсен хĕл кĕçех çитет, хĕлле хаяр сивĕсем пулаççĕ.*

*■ Тӳпере кĕркунне çăлтăрсем мĕлтлетсе çунаççĕ – çанталăк улшăнать, çăлтăрсем янкăрах йăлтăртатаççĕ – çил тата типĕ çанталăк килет.*

*■ Пукрав мĕнле – хĕл çапла. Пукравра кăнтăрлаччен кĕркунне, кăнтăрла хыççăн – хĕлле.*

*■ Юпа уйăхĕн 22-мĕшĕнче юр çусан хĕл 40 кунран ларать.*

## Вĕлтренрен – паха удобрени

Вĕлтренрен паха удобрени хатĕрлеме пулать. Çак ĕç питĕ ансат.

Вĕлтрене тунипех пуçтармалла та турамалла, витрене тултармалла, ăшă шыв ямалла /пĕр пай вĕлтрен, пĕр пай шыв пулать/. Витрене хĕвел ӳкекен çĕре лартмалла. Вăхăтран вăхăта пăтратмалла. 12-14 кунран витрери шыв симĕсленет, кăпăкланма пăрахать. Пулчĕ те.

Çăра удобрени хатĕр. Пĕр литр симĕс шĕвеке 10 литр шыв хушса усă курмалла.

Вĕлтрен шывĕнче тĕрлĕ микроэлемент пур: кали, кальци, магни, азот, фосфор. Йăлтах çутçанталăк пани, çавăнпа ӳсентăрана ним чухлĕ те сиенлемест вĕлтрен шывĕ.

Удобрени пахчаçимĕçе çирĕплетет, ӳсме пулăшать. Унпа çулла 3-4 хутчен шăварма юрать.

Хăяршăн, ыхрашăн, помидоршăн, суханшăн уйрăмах усăллă.



## Кун мĕнпе паллă

**Октябрь, 22** – Пĕтĕм тĕнчери Шурă тăрна кунĕ. Тытăнчăклă калаçакансен кунĕ.

**Октябрь, 23** – Рекламăра ĕçлекенсен кунĕ.

**Октябрь, 24** – Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн кунĕ /ООН/. Хĕллехи вăрăм каçсен пуçламăшĕ.

**Октябрь, 25** – Автомобилист кунĕ. Раççейри таможенник кунĕ.

**Октябрь, 26** – Мир çинчен Декрет йышăннă кун.

**Октябрь, 28** – Пĕтĕм тĕнчери анимаци фильмĕсен кунĕ.

ÇЫРĂНТАРУ – 2016
ОКТЯБРЬ: 15-25

Почтăпа редакцисен пĕрлехи акцийĕ:
ÇЫРĂН ТА – УКÇУНА ПЕРЕКЕТЛЕ

«ХЫПАР» – 570,30 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В 4800
«ХЫПАР» – эрнекун – 297,84 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В 8353
«КИЛ–ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ» – 183,18 тенкĕ. Çырăнтару индексĕ – В 4806

## Вулакансем ыйтнипе

## Кишĕр мĕншĕн йӳçенкĕ?

**Кишĕр кăçал аван пулчĕ темелле, анчах йӳçенкĕ çимĕç нумай. Кишĕр мĕншĕн йӳçенкĕ пулать?**

**Лидия ПЛАТОНОВА.**
Етĕрне районĕ.

Кишĕр йӳçенкĕ пулнин икĕ сăлтавне палăртма пулать.

1. Кишĕр ӳснĕ чухне унăн тăрри çĕрпе лайăх хупланаймасăр симĕсленнĕ. Çак тĕлте соланин ятлă наркăмăш пуçтарăнать. Кунашкал кишĕр управра выртнă чухне соланин çимĕçе сарăлать, вăл йӳçекленет. Кишĕрĕн симĕсленнĕ пайне апата яма юрамасть. **Симĕсленесрен мĕн тумалла-ха?** Йăрана çумланă, кăпкалатнă чухне кишĕр речĕсене купаламалла. Шăварнă майăн тăпра пусăрăнса аннине асăрхасан ретсене каллех купаламалла. Калăпăр, кăларнă çимĕçĕн пысăк пайĕ симĕсленнĕ. Йăлтах кăларса пăрахма шел-çке. Кишĕрĕн симĕсленнĕ тăррине касса пăрахмалла, тĕттĕм çĕрте икĕ кун вырттармалла. Каснă вырăн хытсан çимĕçе яланхи меслетпе упрама хума юрать. Каснă тĕле ыхра отварĕпе сăтăрса илме пулать.

2. Управра выртакан кишĕр типĕ çĕрĕк чирĕсемпе сиенленме пултарнă. Хура типĕ путăксем пурринчен пĕлме пулать ăна. Çĕрĕке чир кăмпи аталантарать. Кишĕрте çĕрĕк спорисем ĕрчеççĕ, вĕсем çимĕçĕн пылаклăхне аркатаççĕ. Кишĕр пахалăхĕ, тути япăхать. Сиенленнĕ, аманнă çимĕçе вăрах упрама юрамасть. Управри çимĕçе пăхкаласах тăмалла. Кишĕре тĕттĕмре упрамалла, сутă çинче вăрах выртсан кишĕр йӳçекленет.

## Нӳхрепре ӳсет

Брокколи купăстине пахчара çитĕнтеретĕр-и? Ăна çитĕнтернĕ чухне чи кăткăсси купăстана вăхăтра касасси пулĕ. Çапла вăл, брокколи, ĕнер çеç пуçĕ самаях хытă пекчĕ, тепĕр кунне пăхатăн – брокколи чечек çурма пикеннĕ. Унăн пуçĕ чечеке лариччен пĕр йышра чăмăртанса тăрать, чечекленес умĕн пĕчĕк пуçсене пайланать, унтан чечекленме пуçлать. Çеçкеленекен брокколи апата юрăхлах мар.

Брокколи пуçне каснă хыççăн тунине тӳрех тăпăлтарса пăрахма ан васкăр. Юлнă тунари çулçăсен кăкĕнчен çĕнĕ пĕчĕк пуçсем чăмăртанса тухаççĕ. Паллах, вĕсем малтанхисем пек шултăрах мар, анчах та йышлă.

3-5 см диаметрлă чăмăртаксене хура кĕркунне те çитĕнтермелли меслет пур. Çанталăк шăнтиччен брокколине тымарĕ çумĕнчи тăприпе асăрханса кăлармалла та тӳрех карçинккана лартса нӳхрепе антармалла. Карçинккана /урăх савăт та юрать/ туллиех, тунари çулçисем таран тăпра тултармалла.

Брокколи «ачисене» ӳсме юрăхлă услови тăватпăр. Нӳхрепри брокколине сутă кирлĕ мар, тĕттĕм вырăна лартатпăр. Тăпрана нӳретсех тăратпăр, нӳхрепри сывлăш температурине +3...+4 градус шайĕнче тытма тăрăшатпăр. Çакăн пек çĕрте тунари сĕткен, тутлăхлă япаласем брокколи чăмăрккисенче пуçтарăнаççĕ. Пĕр уйăхра нӳхрепри брокколи «ачисем» самаях ӳсеççĕ.

## Тĕшмĕшех те мар пулĕ...

- Утмăлтурат усал вăя хăвалать. Утмăлтурат çыххине типĕтсе алăк çывăхне хурсан киле усал çын пымасть имĕш.
- Типĕтнĕ сар çип утине атă-пушмак тĕпне шал енчен саракан сăран айне хумалла – усал куçран, пăсăнчăкран хӳтĕлет.
- Çăка аça çапасран сыхлать. Çак йывăç айĕнче аслати те хăрушă мар. Çăкапа юнашар çурта аçа çапмасть тенĕ.
- Типĕтнĕ йĕтĕне ĕлĕк çынсем пĕчĕк çеç хутаçа хунă, кăкăр тĕлне шал енчен çирĕплетнĕ. Вăл çынна çула тухсан хӳтĕленĕ, вăй панă.
- Армути тураттине атă-пушмака хурса çӳресен çынна пĕрмаях ăнăçу кĕтет.

## Пĕлни пăмасть

- Риса тăвар хушнă вĕрекен шыва ярса пĕçерсен унăн пахалăхĕ çухалмасть.
- Хĕрлĕ кăшмана çемçеличчен вăрах пĕçермелле – 2-3 сехет. Хăвăрт пĕçермелли меслет – пĕр сехет вĕретнĕ хыççăн кастрюле çулăм çинчен илмелле те шывне тăкса кăшмана сивĕ шыва ямалла. Сивĕ шывра 10-15 минут тытнă кăшман чиперех çемçелет.
- Винегрета пĕр апат кашăкĕ сĕт, пĕр чей кашăкĕ сахăр хушсан тутлăрах пулать.

## ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 22.10 | + 3 | – 1 |
| 23.10 | + 2 | + 1 |
| 24.10 | + 2 | 0 |
| 25.10 | + 3 | + 3 |
| 26.10 | + 3 | + 1 |
| 27.10 | + 3 | + 2 |
| 28.10 | + 4 | + 2 |

## КУН ТĂРШШĔ

| | Кун тăршшĕ | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|
| 22.10 | 09.56 | 10 у.к. |
| 23.10 | 09.52 | 11 у.к. |
| 24.10 | 09.47 | 12 у.к. |
| 25.10 | 09.43 | 13 у.к. |
| 26.10 | 09.38 | 14 у.к. |
| 27.10 | 09.34 | Уйăх тулать. |
| 28.10 | 09.29 | 16 у.к. |

Кун тăршшĕ 9 сехет те 29 минут, 7 сехет те 58 минут кĕскелет. Çĕнĕ уйăх.

## Хризантема

**Хризантемăн тăван çĕршывĕ – хĕвелтухăç Китай, Корея çурутравĕ, Япони. Хальхи вăхăтра хризантемăна таçта та ӳстереççĕ. Пирĕн тăрăхри хĕле тӳсĕмлĕ сортсем те сахал мар. Пахчара çитĕнтерекен хризантемăсем çуркуннехи сивĕсене те лайăх чăтса ирттереççĕ, тĕмсене лайăх хупласан чиперех хĕл каçаççĕ. Çак чечекĕн 700 тĕрлĕ сортне хатĕрленĕ селекционерсем.**



Хризантема çу варринчен тытăнса мĕн сивĕсем киличчен пахчана илем кӳрет. Унăн чечекĕ çĕр-çĕр тĕслĕ: шурă, кĕрен, хĕрлĕ, сарă, шупкарах симĕс... Çӳллĕ ӳсекеннисем пĕр метр ытла çитĕнеççĕ, лутрисем /карликовые/ пурĕ те 30 см яхăн çеç. Чечекĕсен калăпăшĕ те тĕрлĕ: пысăккисен диаметрĕ 12-15 см, пĕчĕккисен – 3-4 см. Чечек форми ахаль салтак тӳми курăкĕ пеккинчен пуçласа кăпăшка помпон, çăлтăр е йĕпленчĕк евĕрлисем таранччен.

Нумай çул ӳсекен хризантема пĕр вырăнта 5 çул ларма пултарать. Анчах нумай çул пĕр тĕлте пулсассăн хризантемăн чечекĕсем вĕтелеççĕ. Çулсерен е икĕ çулта пĕрре апрель уйăхĕнче çĕнĕ вырăна куçарсассăн аванрах. Куçарса лартнă чухне пысăкланса кайнă тĕмсене пайламалла. Тĕме асăрханса кăлармалла, 5-7 см ӳснĕ çамрăк хунавсене уйăрмалла та пĕр-пĕринчен 30-35 см хăварса лартмалла. Чечек илемлĕн çитĕнтĕр тесен ăна формăласа касмалла. Сĕре вăхăтра ӳссе каякан туратсене кĕскетмелле, вара аяккинчи турачĕсем лайăхрах аталанаççĕ, тĕм тикĕссĕн ӳссе чечекленет.

Хризантемăна хĕле мĕнле хатĕрлемелле? Тепĕр çул та хӳхĕм чечеклентĕр тесен мĕн тумалла? Хризантема чечекленсе пĕтнĕ хыççăн тунана çĕр çуммипех касмалла. Унтан тĕм йĕри-тавра кăпкалатмалла, тăпрана купаламалла, улăмпа е типĕ çулçăпа хупламалла. Çӳллĕ мар, пĕчĕк чечеклĕ сортсем лайăх хĕл каçаççĕ. Пысăк чечеклĕ çӳллĕ хризантемăсене тăпрапах кăларса карçинккана хумалла, нӳрĕ хăйăр сапмалла та нӳхрепе е тĕпсакайне антарса упрамалла. Тымар типесрен тăпра муклашкине сайра хутра шыв сапса нӳретмелле.

Хризантемăна ĕрчетме кăткăс мар. Ăна тĕме пайласа, туратран тата вăрăран ӳстерме пулать. Чи ансатти – çуркунне тĕме пайласа лартни. Хризантемăн турачĕсем те хăвăрт тымар яраççĕ. Хризантема чечекĕн çыххинчен пĕр туратне касса илсе тымара аталантаракан имçам хушнă шыва лартсассăн та вăл хăвăртах тымарланать. Чечекĕн çӳлти пайĕнчен 3-4 çулçăллă 7 см турат касса илмелле. Туратран ĕрчетме, паллах, çуркунне лайăххрах. Çерем тăприпе хăйăр хутăштарса лартнă чӳлмекре 2 уйăх аталантарнă хыççăн пĕчĕккĕн уçă çĕре хăнăхтарса пахчана куçарса лартмалла.

Хризантемăна лайăх чечеклентермешкĕн тутлăхлă япаласемпе апатлантарсах тămалла. Лартнă чухне тăпрана çапла хатĕрлемелле: 1 тăваткал метра 5 кг çĕрнĕ тислĕк, 3 стакан йывăç кĕлĕ хушмалла. Ăна сутă лайăх лекекен вырăна лартмалла, çулла кăнтăрлахи шăрăхра хĕвелтен хупламалла. Çуркунне чечеке лайăх шăвармалла, чечек папкисем тухма пуçласан асăрханса шăвармалла. Çеçке çурнă вăхăтра хризантема йĕри-тавра тăпра йĕпе пулмалла мар, нӳрлетсе çеç тăмалла. Кашни уйăхрах минерал удобренипе апатлантармалла. Çĕр шăнниччен тĕме хупласа хĕле хатĕрлемелле.

## Сысна самăртатпăр

Мĕнлерех аш пуласси сысна ăратĕнчен, еплерех тăрантарнинчен нумай килет.

**Салă валли.** Çак тĕллевпе «бейкширская», «большая черная», «украинская степная», «миргородская» йăхсен çурисене туянма тăрăшмалла. 6 уйăха çитсен аçисене кастармалла, капла вĕсем лайăхрах çиме пуçлаççĕ, ӳт ытларах хушаççĕ.

**Ветчина, бекон хатĕрлеме.** «Уржумская», «муромская», «эстонская», «большая белая» йăхсем лайăх. 2 уйăхри сысна аçисене кастармалла. Сыснасене 7 уйăха çитиччен çеç самăртмалла, 95-110 килограма çитсен пусмалла. Кун пек чухне вĕсем питех мăнтăрланаймаççĕ. Выльăха хывăхпа, тырăпа, пахчаçимĕçпе, курăкпа тăрантармалла. Шăмă çăнăхĕ, çĕве шывĕ лайăх апат шутланать. Сыснасене уçă сывлăшра пулма майсем туса памалла.

**Ашлăх ӳстерме.** Çакăн валли юрăхлă йăхсем – «северокавказская», «кемеровская», «латвийская», «литовская белая».

Ку çурасене 8 уйăхран ытла самăртма кирлĕ мар /100-120 килограма çити/. 5 уйăха çитиччен вĕсене мышца тĕртĕмне ӳстерме белокпа пуян апатпа, каярах пахчаçимĕçпе, курăкпа, комбикормпа тăрантармалла. Апата тăвар хушмалла. Пусас умĕн вĕсен рационĕнче пулă, хывăх ан пулччăр – çак çимĕçсене пула аш тути япăхать.

## Тĕпелте чухне

### Купăста шницелĕ

**1 пуç пысăках мар купăста, 4 çăмарта, вĕтетнĕ сухари, услам çу кăштах, тутине кура тăварпа пăрăç кирлĕ. Соус валли: 100-шер грамм майонезпа хăйма, укроп кирлĕ.**

Соус валли майонезпа хăймана хутăштармалла, вĕтетнĕ укроп хушса лайăх пăтратмалла, сивĕтмĕше хумалла. Купăстана турамалла, тăвар янă шывра 5 минут пĕçермелле. Çăмартана тăварпа, пăрăçпа, кăштах услам çупа кăпăшлантармалла, купăстана çак хутăша ямалла, ун хыççăн – вĕтетнĕ сухари. Ӳсен-тăран çăвĕнче ăшаламалла. Маларах хатĕрленĕ соуспа çиме аван.

### «Ириска» канфет пĕçерер-и?

**«Ириска» тума кирлĕ: 1 стакан хăйма, 1 стакан сахăр песукĕ, 20-30 гр услам çу.**

Пĕçерме лартиччен шĕвĕ канфета яма савăт хатĕрлемелле. Ятарлă пĕчĕк силикон форма туяни пулать. Малтанлăха ал айĕнчи савăт та юрать. Кекс е кукăль пĕçермелли формăна пергамент хутне сармалла, тип çупа лайăх сĕрмелле. Тип çу сĕрмесен хута канфетран вистеймĕн.

Ирискăна пĕçерме нержавейка савăт аван. Эмальленĕ савăт тĕпне ирĕлчĕк çунса ларать. Кастрюле хăймапа сахăр песукĕ яратпăр та вăйсăр çулăм çине лартатпăр. Вĕриленнĕçемĕн хутăша пăтратсах тăмалла. Малтан вăл вăйлă кăпăкланать, 20 минутран çăралма тытăнать, çăратнă сĕт /сгущенка/ евĕр пулать. Тепĕр 15 минутран хутăш хăмăрланать. Унта услам çу яратпăр. Пăтратса тăрса тепĕр 10 минута яхăн тытатпăр. Хутăш çăралса пырать. Çулăм çинчен илетпĕр те формăна яратпăр. Сивĕннĕ майăн формăран кăларатпăр та çĕçĕпе касатпăр.

### Пахчаçимĕçпе чăх какайĕ

Чăх какайне шултрах мар туратпăр та тип çупа кăштах ăшаласа илетпĕр. Пăрăçа тăрăххăн туратпăр, сухана – çурма çаврасемпе, кабачока, помидора, купăстана – тăрăххăн, кишĕре шултра теркăпа хыратпăр. Ăшаланă чăх какайĕ патне малтан сухан яратпăр, кăштах ăшалатпăр, унтан кишĕр, купăста, помидор хушса пăшăхлатпăр. Юлашкинчен кабачокпа пылак пăрăçа хушатпăр. Пăтратса тăвар, лавр çулçи, авăртнă хура пăрăç сапатпăр та çатмана витсе вăйсăр çулăм çинче пăшăхлатпăр.

Вăхăта хамăра килĕшнĕ пек палăртатпăр. Çемçелнĕ пахчаçимĕçе юратсассăн çатмана çулăм çинче 30 минута яхăн тытмалла. Пит çемçелсех кайман пахчаçимĕç килĕшет-тĕк – сахалрах вăхăт пăшăхлатпăр.



## Пӳлĕмри чечексем

Хĕллехи вăхăтра пӳлĕмри чечексенчен чылайăшĕ канать. Вĕсем ӳсме, чечекленме пăрахаççĕ. Кĕркуннерен вĕсене сайра шăвармалла, тутлăхлă япаласемпе çуркуннечен те апатлантармалла мар. Кактуссене, алоэ чечекне уйăхне 1-2 хутчен çеç шăвармалла. Паллах, куршакри тăпра ытлашши типсе каясран асăрхамалла, çавăнпа ăшă батарейкисенчен аяккарах лартмалла.

Кĕркунне аталанакан чечексене – цикламен, примула, азалия, сенполия, орхидея – çутă вырăна лартмалла, час-часах ӳсен-тăран çулçисене ăшă шывпа пĕрĕхмелле, кун çути çитменнипе каçсерен фито лампа çутса памалла.

Фуксипе гортензине хĕл каçма сивĕрех вырăн кирлĕ. Вĕсене ăшăрах верандăна /+3...+6°С/ е тĕпсакайне лартма юрать. Уйăхра пĕр хут шăварсан çителĕклĕ.



## ĔÇ РАБОТА

**54.МОНОЛИТЧИКИ** в г. Йошкар-Ола. Куб – 2500 руб. Жилье, питание. Т.: 89176737773, 89625997773.

**126.Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики, сварщики.** Питание, спецодежда. Вахта. Тел. 8-925-002-22-38.

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

**668.**Для работы в Нижегородской области **ТРЕБУЮТСЯ РАЗНОРАБОЧИЕ.** Проживание в общежитии, 3-разовое питание. Оплата после вахты. ООО «Славия» Т. 8-906-133-67-72.

**728.**В компанию **требуются менеджеры по продажам сельхозтехники.** График работы 5/2, оформление по ТК. Достойная оплата. Тел. 8-927-851-68-58.

## ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**28.Вăкăр,** ĕне, **тына, сысна амисем.** Т. 8-927-999-37-37.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**50.Коров.** Т. 89278508564.

**108.Тёлок, коров.** Т. 8-937-014-49-97.

**403.КРС** – по высоким ценам. Т. 8-906-132-76-04.

## ЙЫХРАВ ПРИГЛАШЕНИЕ

**31 октября** в национальной библиотеке по адресу: г. Чебоксары, пр. Ленина, д. 15 состоится **форум пчеловодов** «Помоги пчеле». Начало в 10 часов. Т.: 8-905-343-39-75, 8-937-373-39-75.

Реклама Пĕлтерӳ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

компания немецкие ОКНА И ДВЕРИ
• рольставни • ворота • жалюзи
• замер • доставка (бесплатно)
Тел. 8(927) 844-78-11

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
Изготовление в короткие сроки.
Гарантия качества
Скидки до 30 %
Тел. 89176594701.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
www.oknavdom21.ru
Рассрочка. СКИДКИ - доп. пенсионерам
Замер, доставка по Чувашии БЕСПЛАТНО
АКЦИЯ! 7-ое окно в подарок и 4 потолок
8 937 955-33-00 8 987 662-61-62
АКЦИЯ: по ценам 2014 года!
окна по себестоимости для застройщиков

## ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**36.Известный чебоксарский экстрасенс, хиромант** – сниму порчу, поставлю защиту, помогу в решении семейных и финансовых проблем. Т. 89063808628.

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 89030662902, 89276673368. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**46.Бурение** колодцев, **углубление; продажа** и **д-ка** ж/б колец. bur.21.ru. Т. 89053434207.

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца** колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**57.Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 89373756378, Мила.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** – за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**191.КРОВЛЯ, обшивка** сайдингом, **утепление.** Т. 89176500640.

**269.Утепляем** дома **ЭКОВАТОЙ и ПЕНОИЗОЛОМ.** Проф. Монтаж. Гарантия на работы. Осенние скидки. Т. 8-919-669-16-66.

**406.Строительные работы** – от фундамента до кровли. Недорого. Качественно. Т. 89196534368.

**597.Бурение скважин.** Т.: 8-962-321-17-80, 21-17-80.

**617.Бурение колодцев, скважин.** Т.: 89674703824, 89279905481.

**649.Кровельные, фасадные работы.** Гарантия. **Т. 8-903-322-04-79.**

**664.Утепление ЭКОВАТОЙ** домов, стен, чердаков, полов, мансард. **Скидки.** Т. 89176627164.

**738.Все виды строительных работ.** Т. 9-927-840-29-22.

## СУТАТĂП ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки, прихожие, шкафы, комоды, столы, кровати. Доставка, сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24. **Сайт:** www.ex-comfort.ru.

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ** керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные, заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, **документы.** Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, **металлосайдинг. Согнём** любые доборные элементы для кровли и фасада. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич, БЛОКИ.** Т. 8-961-339-33-63.

**19.КИРПИЧ** красный, силикатный, **гравмассу,** щебень, **керамзит,** песок, кольца, **к/б блоки.** Т. 8-927-862-91-66.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные КОЛЬЦА.** Т. 89033468556.

**27.Красноармейские КЕРАМБЛОКИ** – высококачественные, пропаренные /стеновые, перегородочные/, **сухие** строительные **смеси.** Доставка. Т. 89033220052.

**30.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**33.Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки.** Доставка. Т.: 89033220208, 89276674605.

**34.Гравмассу,** песок, **щебень.** Услуги крана. Доставка до 25 тн. Т.: 89176500385, 89603073399.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**37.Ворота,** калитки, заборы, навесы. Ковка, **кровля,** обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 89022881447, 387574, metalservis21.ru

**40.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова, горбыль.** Т. 8-903-389-14-00.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**67.БЛОКИ керамзитобетонные,** тротуарные плиты, песок. Доставка. Тел. 8-917-676-27-37.

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.Срубы** с комплектацией "под ключ". **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

**93.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, половняк, **КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**154.ОКНА и ПОТОЛКИ** – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Пенсионерам скидки. Рассрочка. Т. 89176627164.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**188.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-927-846-24-10.

**190.ТЕПЛИЦЫ, козырьки, навесы.** Монтаж. Т.: 289798, 89176500640.

**205.Цемент, песок, гравмассу,** щебень, **керамзит,** блоки. Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**241.Бетон, раствор,** фунд. блоки, **плиты – дешево.** Д-ка по ЧР. Т.: 89278535732, 89373803596.

**251.МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦУ,** профнастил, металлосайдинг, пластиковые окна. **Доставка,** замеры. **СТРОИТЕЛЬСТВО.** Т. 89196534368.

**270.Кольца колодезные** 0,7м, 1м, 1,5м. Д-ка. Установка. Т.: 36-26-23, 8-903-379-77-68.

**591.БЕТОН.** Д-ка. Т. 89677906116.

**596.ТЕПЛИЦЫ** по ценам производителя. Доставка. Сборка. Т. 48-16-54.

**648.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг, водостоки.** Замер. Доставка. Скидки. Т. 89033220479.

**650.Тротуарную плитку, брусчатку.** Замер. Д-ка. Укладка. Скидки. Гарантия. **Т. 89033220479.**



**700.Колодки для тапочек** – 1500 руб. Доставка. Т. 89373744701.

**679.Керамблок** (20х20х40, 12х20х40, 9х20х40), **колодезные кольца,** гравмассу, **песок,** керамзит. Доставка. Т. 89033226846.

**698.Пластиковые ОКНА ПВХ.** Т.: 8-927-850-61-39, 89524642171.

**709.Пушмак** пăру, **чуптарнă пăру,** пĕрре пăруланă **ĕне** – пурте хура-шурă тĕслĕ. Шурашкар р-нĕ. Т. 8-927-665-20-70.

**714. Чуптарнă пăру** – Шупашкар районĕнче. Т. 8-927-868-22-35.

**724.Песок, гравмассу, керамзит,** чернозем, навоз. Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**727.Керамзитобетонные БЛОКИ** 20х20х40, 12х20х40, пропаренные. Доставка манипулятором. Т.: 89050284130, 89033462293.

**729.Кованые заборы, решетки,** козырьки, урны, скамьи, калитки, **ворота.** Т. 8-987-737-29-39.

**736.Месячных БЫЧКОВ** на откорм по **8000 руб.** Доставка по ЧР. Т.: 89176641716, 89196690171.

**742. Сăвакан КАЧАКА /чуптарнă/.** Т.8-905-344-50-95.

ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ ХЫПАР ИЗДАТЕЛЬСКИЙ ДОМ

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çурчĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ

Редактор Э.Н.ИВАНОВА

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, “Кил-çурт, хушма хуçалăх”.

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 56-15-30, 56-00-67.

коммерци дирекцийĕ: 28-83-70, 56-20-07 – инспекторсем.

Факс: /8352/ 28-83-70.

Электронлă почта: hypar@mail.ru

hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.

21.10.2015. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

Тираж 15743. Заказ 4096.